ВĂХĂТА ХАКЛАМАЛЛА, ÇЫНСЕМШĔН ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

чăн цифра хăратать – 2005 çулта вăл 17 пинпе танлашнă. Ку вĕт 17 пин çуралман чун, Турра ĕненекен çынсемшĕн – вĕлернĕ чĕрĕ чунсем! Хĕрарăмсен сывлăхĕ çине ир пуçланнă ар пурнăçĕ хĕрарăмсен сывлăхĕ çине палăрмаллах витĕм кӳрет. Тĕслĕхрен, юлашки пилĕк çулта гинекологи чирĕсемпе чирлекен 17 çула çитичченхи хĕрачасен йышĕ 1,5 хут ӳснĕ. Çакăн çине çамрăклах ар пурнăçĕпе пурăнма тытăнни тата çула çитмен ачасен хушшинче ассоциаллă тыткаларăшсен тĕслĕхĕсем анлăн сарăлни витĕм кӳрет.

Енчен те çак ыйту çине ашшĕ-амăшĕпе шкул уйрăмах тимлĕх пăхмасан патшалăх ун çине витĕм кӳреймест. Кунта вĕт сăмах мораль çинчен те, пирĕн хĕрарăмсен сывлăхĕ çинчен те пырать. Пирĕн ку тĕлĕшпе пурин те ĕçлемелĕх пур: çемьене планлас ĕçре воспитани кирлĕхĕ енчен те, ар хутшăнăвĕсен культурине йĕркелес тĕлĕшпе те.

Пирĕн медиксене тав тăвас пулать – вĕсем тăрăшнипе нумай ĕç тунă. Профилактика мерисене пула ачасем вăхăт çитмесĕр çураласси 15 процент, аталанса çитеймесĕр çуралнисен шучĕ 9 процент чухлĕ чакнă. Ача çураттарас практикăна çемье ыйтăвне тĕпе хуракан халăхи вăхăтри перинаталь технологийĕсем тата ача амăшĕсен хăрушсăрлăхне тивĕçтерекен принципсем кĕрсе пыраççĕ. Паян Чăваш Енри çемьеллĕ мăшăрсен 17 проценчĕ ача çуратаймасть. Паллах, Президентăн перинаталь центрĕнче тăрăшакан пысăк ăсталăхлă тухтăрсем çавнашкал мăшăрсем ачаллă пулччăр тесе хăйсенчен килнине пĕтĕмпех тăваççĕ. Çак çулсенче «шанчăксăр» шутланнă 500 çемье ачаллă пулса тăнă. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта хулари перинаталь центрĕсем усăлнă. Халĕ сахал тупăшлă çемьесем пысăк технологиллĕ медицина пулăшавĕ илнĕ чухне тӳсекен тăкаксене саплаштарас ĕçе патшалăх та хутшăнать. Эпир ун пек çемьесене пулăшнă, малашне те яланах пулăшăпăр.

Чăваш Енре пурăнакан кашни çыннăнах çакăн пек ыйту çуралма тивĕç: хальхи ăру хушшинче ача çуратма пултарайманнисен йышĕ çавăн чухлех пулни мĕнрен килет-ха? Пирĕн, ахăртнех, хамăр çине айккинчен тепĕр хут пăхса илсе хамăрăн пурнăç йĕрки пирки шутламалла: эпир хамăрăн сывлăха еплерех упрани, ӳт-пĕве аталантарас тесе мĕнлерех тăрăшни пирки. Табак туртрăмăр, сăра ĕçрĕмĕр, хĕрлĕ тата шурă эрехе те тутантăмăр, çийĕнчен «курăкпа» ашкăнтăмăр – анлă сарăлнă киленӳсем! Эпĕ кунта çынсем ирхи зарядка тума, эрнере ик-виç сехет те пулсан спорт валли вăхăт уйăрма пăрахни пирки каламастăп та! Унашкал япалана çын хăй тĕллĕн, патшалăх органĕсем хутшăнмасăрах тумалла! Çапла мар-им?!

Пĕлтерĕшлĕ проблема – ачасем чирлени тата вилни. Çулсерен республикăра 100-тен пуçласа 150 таран ачапа çамрăк вилет. 70 проценчĕ - тулашри сăлтавсем. Ачасем ытларах шыва путса тата çул çинчи инкекре шар кураççĕ, çул çитменнисем хушшинче хăйсем çине алă хунă тĕслĕхĕсем те сайра мар. Ку вара пирĕн, çитĕнисен, умĕнче ачасене шывра ишме вĕрентес тĕллев тăнине пĕлтерет, çавна май кунта патшалăхăн бассейнсем тăвассипе çыхăннă политики кăна çителĕксĕр. Эпир çул çитменнисене психологи тĕлĕшĕнчен «ишме» вĕренме пулăшма тивĕç. Çак ĕçе пурин те - ашшĕ-амăшĕн те, психологсен те, вĕрентекенсен те хутшăнмалла.

Патшалăх тата общество институчĕсен пурин те çул çинчи хăрушсăрлăха тивĕçтерессине тата та хастартарах хутшăнмалла, çул çинчи шанчăксăр лаптăксен хăрушсăрлăх инфратытăмне йĕркелемелле, велосипед çулĕсем, чупмалли, çуран çӳремелли çулсем тумалла.

Шкулти апатлану – пĕлтерĕшлĕ тата тепĕр проблема. Çиелтен пăхсан, республикăри ачасен 95 проценчĕ шкулта апатланать пек пулса тухать, анчах чылай ача шкул столовăйĕнчи тата буфетĕнчи апата çимест – тутлă мар, пахалăхсăр, эпĕ вара хальхи вăхăтри мар тенĕ пулăттăм. Вăл вара хакран та, çак ыйтăва вăл е ку шкулта принцип енчен мĕнлерех лартнинчен те килет. Саккун тăрăх ку каллех вырăнти хăй тытăмлăхăн ыйтăвĕ, анчах Министрсен Кабинечĕ те çак пĕлтерĕшлĕ проблемăран айккинче тăма пултараймасть. Ку тĕлĕшпе республикăри тĕллевлĕ «Сывă апатлану» программăна хăвăртлатса пурнăçламалла. Унпа пĕрлех вĕренӳ заведенийĕсенче типĕтнĕ çĕр улмипе сникерссем тата кола сутакан буфетсемпе ларексене ĕçлеме чармалла. Ачасен варне хӳтĕлес тĕллевпе çак ĕçе асăннă продукцисене каларакан çĕшывсенче тăваççĕ те ĕнтĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх ертӳçисем, вĕренӳ заведенийĕсен директорĕсем, явапла медицина ĕçченĕсем экологи тĕлĕшĕнчен таса та пахалăхлă ĕçмелли шывпа, вырăнти чĕр тавартан хатĕрленĕ тутлă салатсемпе, сĕт-турăх продукчĕсемпе тата çăкăр-булкăпа тивĕçтерессине йĕркелеме пултараççĕ, тивĕç те.

Пирĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ, общество пурнăçне улăштарас ĕçре тĕп вырăн йышăнакан проект - Президентăн «Çĕнĕ шкул» программи - 10 çул тултарчĕ. Эпир халиччен тунă пĕтĕм ĕç, уйрăмах шкул ачисен сывлăхне упрас тĕлĕшпе пурнăçа кĕртнисем, хăйĕн çимĕçĕсене малашлăхра кăна кӳме тытăнмĕç, вĕсем ĕнтĕ халех пирĕн ачасемшĕн ĕçленине шанатăп. Анчах çакна асра тытмалла: сывлăха сыхлакан технологисем – вĕри апатпа спортзал, бассейнпа шкул автобусĕ кăна мар, вĕрентекенĕн йăл кулли те, педагогсем уроксенче йĕркелекен пĕр-пĕрне ырă сунăм та! Учитель вĕрентекен предмет - тĕллев мар, ачана специалист пек кăна мар, этем пек воспитани парса ӳстермелли, çитĕннĕ пурнăçа хатĕрлемелли инструмент. Кирек хăш вĕрентекенĕн тĕллевĕ, çав шутра предмета ертсе пыраканăн та, аслă та анчах телейсĕр математика е историке вĕрентсе хатĕрлесси мар, килĕшӳллĕ аталанакан тата телейлĕ пулма пĕлекен çынна тата гражданина пăхса ӳстересси пулмалла. Çак контекстра пĕтĕм физкультура учительне, хам ĕмĕрĕпе спортпа туслă çын пулнă май, çакăн пек чĕнсе калас тетĕп: енчен те ача урока çӳрет тата унта мĕн те пулсан тăвать пулсан, физкультура урокĕсенче унăн «тăваттă» тата «пиллĕк» паллăсемсĕр пуçне урăххисем пулмалла мар!

Табак туртнин сиенĕ çинчен шкул ачисен 90 проценчĕ ытла пĕлет пулин те, вĕсем, хăйсем çирĕплетнĕ тăрăх, арçын ачасен - 12, хĕрачасен - 6 проценчĕ кашни кунах туртать. Ачасенчен çурри кăна пĕрре те туртса курман. Интернетра пĕлтереççĕ: табак туртнипе çыхăннă чирсене пула Раççейре çулсерен 400 пине яхăн çын вилет. Ахăртнех, Раççейĕн ырă мар тĕслĕхĕ цивилизациллĕ çĕршывсене «драконла» мерăсем - общество вырăнĕсенче, ĕç вырăнĕсенче тата автомашинăна тытса пынă вăхăтра туртма чаракан саккунсем – йышăнма хистет. Пирĕн вара чĕрĕ реклама параканĕсем – ачасен ашшĕ-амăшĕ! Пирĕн телеканалсенче тата массăллă информаци хатĕрĕсенче алкогольпе табак продукцине сивлесе каланă социаллă антиреклама тени пачах та çук! Пирĕн Патшалăх Думинчи депутатсемпе Федераци Канашĕн членĕсене çак темăпа федераци шайĕнче тухăçлă йышăнусем тума наказ памалла.

Ачасен наркоманийĕ енĕпе Чăваш Ен, йышăннă комплексла мерăсене пула, Раççей шайĕнче питĕ лайăх вырăнта: юлашки пилĕк çулта наркомансен шучĕ 95 процента çити чакнă. Çул çитмен çамрăксем хушшинче психоактивлă хутăшсемпе усă кураксен пĕтĕмĕшле йышĕ чакни палăрать, наркотиксемпе хăнăхса каймасăр усă кураксен шучĕ 90 процент чакнă, сиенлĕ хутăшсемпе усă кураксен йышĕ - 19 процент, токсикоманипе чирлисен шучĕ 34 процент чухлĕ чакнă.

Федераци Канашĕ тунă «Раççей Федерацийĕнчи ачасен лару-тăрăвĕ» докладра Чăваш Енри çавăн пек лару-тăру унта ачасемпе çул çитмен çамрăксене спорт занятийĕсене явăçтарассине тытăмлăн йĕркеленипе, тĕрлĕ формăллă кану ĕçне лайăх шая çĕкленипе çыхăннине палăртнă. Хушса хуратăп: тытăмлă ĕçе кура федераци ертӳçисем те пире кăмăлтан пулăшу кӳреççĕ: çулталăк тăршшĕнче эпир физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли ултă комплекс хута ятăмăр тата юсаса çĕнетрĕмĕр, тата çавăн чухлех 2007 çулта тăватпăр. Спорт керменĕсем тата бассейнсем çавăн пек хăвăртлăхпа тата калăпăшпа туни Чăваш Ен историйĕнче халиччен нихăçан та пулман. Прессăпа тĕл пулнă вăхăтра Раççей спорт ертӳçи Вячеслав Фетисов çакна палăртрĕ: «Чăваш Енре эпир халăхăн пурнăçне тата йăлине ырă еннелле улăштаракан спорт керменĕсем тăвассипе çыхăннă программăна пурнăçа кĕртессинче шанчăклă партнерсене тупрăмăр, унăн паха опытне эпир çĕршыври пур региона та çĕнетпĕр. Унашкал керменсем Европа тата Америка çĕршывĕсенче те час-часах тĕл пулмаççĕ, эпĕ хам курнипе савăнса тĕлĕнтĕм». Эпĕ вара хам енчен эпир вăй хурса тăвакан çав ĕçсем ачасемпе çамрăксене кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшне те физкультурăпа тытăмлăн кăсăкланма, хăйсен киревсĕр йăлисене пăрахса сывă пурнăç йĕркине тытса пыма пуçлама пулăшасса шанатăп.

Профилактика тата сиплевпе диагностика ĕçне вăйлатма пирĕн çамрăксемпе ачасем хушшинчи киревсĕр йăласене мониторинг ирттерекен ведомствăсем хушшинчи ушкăн йĕркелемелле, харпăрлăхăн пур формиллĕ предприяти пуçлăхĕсен вара çынсене хăйсен сывлăхĕшĕн чăн малтанах хăйсем яваплă пулнине туйма пулăшакан «Сывă пурнăç шкулĕсем» йĕркелемелле, сывă пурнăç йĕркипе пурăнакан, спортпа туслă ĕçченсене хавхалантармалли йĕркесене коллективлă килĕшӳре уйрăммăн çырса палăртмалла. Тата, паллах, пирĕн ачасемпе çул çитменнисене тата çамрăксене эрех-сăра, табак тата наркотиксем кӳрекен хăрушлăх çинчен ăнлантарас тĕлĕшпе ĕçлекен пултарулла çамрăксене хастартарах пулăшмалла.

16 çул тултарман çамрăксем çĕрлехи вăхăтра канăва йĕркелекен организацисенче пулнăшăн пĕлтĕр 27 юридически сăпата административлă майпа явап тыттарнă, 200 яхăн юридически сăпата - алкоголь продукцийĕ сутнăшăн. Тĕслĕхсем вара – пиншер! Патшалăх Думин депутачĕсемпе Федераци Канашĕн членĕсен шутласа пăхмалла: çавнашкал наказани адекватлă-и? Ун пек ăнман предпринимательсенчен лицензине вуççех туртса илмелле мар-и? Нумай çĕршывра шăпах çапла тăваççĕ те, çавна пулах унта ун пек йĕркесĕрлĕх пачах та тĕл пулмасть.

Тепĕр тема – ача интересĕсене, унăн çын тивĕçлĕхне хӳтĕлесси! 400 яхăн ашшĕ алимент тӳлессинчен пăрăнать. Ку вăл официаллă статистики кăна-ха! 2006 çулта çул çитменнисене хĕсĕрленипе çыхăннă 2 пине яхăн преступление шута илнĕ. Çынна хĕненĕ тĕслĕхсен шучĕ ӳсет. Шута кĕмен пусахлани мĕн чуль тата?

Çавăнпа та çулталăк тĕллевĕсенче - ачана дискриминацин пур тĕсĕнчен те тата харпăр хăйĕн пурлăх прависене хӳтĕлес тĕлĕшпе хушма мерăсем йышăнасси, тĕрмере ларса тухнă çул çитменнисене реабилитацилеме тухăçлăрах тытăм йĕркелесси. Министерствăсемпе ведомствăсен тата муниципалитетсен уйрăм ĕçĕ-хĕлĕ хальлĕхе ачасемпе çул çитменнисен чылай ыйтăвне татса параймасть. Министрсен Кабинетне пурин вăйне те пĕтĕçтерсе йĕркесĕр çемьесен, социаллă теветкеллĕхе лекнĕ кашни ачан пĕрлештернĕ даннăйсен банкне йĕркелеме хушатăп. Вырăнти администраци ертӳçисене теветкеллĕ ушкăнри çула çитмен ачаллă çемьесене тупса палăртас тĕлĕшпе территорири общество канашĕсен ĕçне вăйлатма, çемьери йĕркесĕрлĕхе тӳрлетме унашкал çемьесен тытăмлă патронажне йĕркелеме, çав ĕçе вырăнти хăй тытăмлăхăн депутачĕсене те явăçтарма сĕнетĕп. Çĕнĕ Шупашкарти социаллă службăн участокри ырă опычĕпе, микрорайонти проблемăллă çемйесене тупса палăртма пулăшакан социаллă карттă тунă пуçарупа, пур çĕрте те усă курмалла.

Чăваш Енри Ача çулталăкĕ чăн малтанах ведомствăсем хушшинчи хутшăнусене çемье, хĕрарăмсемпе ачасен интересĕсемшĕн палăрмаллах улшăнусем кӳрсе ку тĕлĕшпе улшăну çулĕ пуласса шанатăп. Министрсен Кабинечĕн тивĕçлĕ ĕç планĕ уçă документ пулать тата çĕнĕ те кирлĕ программăллă мероприятисемпе пуянланать - ĕç тăвакан тата саккун кăларакан влаçсем енчен те, федераци ведомствисем, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата граждан обществин институчĕсем енчен те.

Паллах, ӳт-пӳ сывлăхĕ - калама çук пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен унсăрăн наци хăтăлса юласси, демографи лару-тăрăвне тӳрлетесси пирки калаçма май та çук. Анчах хальтерех кăна каланине тĕпе хурса хамăрăн социаллă чир, çитĕннисенчен ачасене куçса вĕсен ăстăнне амантса улăштаракан ерекен чир çинчен сăмахланă май, тепĕр хут палăртса хăваратăп: ӳт-пӳ экологийĕ пĕлтерĕшлĕ, анчах чун экологийĕ унран та пĕлтерĕшлĕрех. Ача ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен кăна мар, моральпе этика енчен те сывă, ăслă-тăнлă, пысăк интеллектлă пулма тивĕç. Наци сывлăхĕн проблемисем, халăхăн ытти проблемисем пекех, сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсенче мар, вĕренӳ, çут ĕç тата воспитани паракан учрежденисенче пухăнса пыраççĕ тата çавсенчех татăлаççĕ.

Çак енчен калама çук пĕлтерĕшлĕ сыпăк – шкулченхи воспитани тытăмĕ. Çак Çырăва хатĕрленĕ вăхăтра ман почтăна килнĕ ыйтса çырнисем хушшинче çак темăллисем те сахал мар. Вунă çул хушшинче пирĕн çавнашкал формăллă пĕлӳ парасси аллă виççĕрен утмăл сакăр процента «Раççейĕпе – аллă тăваттăран пуçласа утмăл пĕр процент таран» çити ӳснĕ. Анчах ку пире тивĕçтермест! Кашни ачах, шкулти пекех, пĕр тан старт условийĕсенче пулни кирлĕ. Паян ача çураласси ӳснĕ, ĕç рынокĕнчи лару-тăру палăрмаллах лайăхланнă вăхăтра эпир ача сачĕсен проблемисене татса пама тивĕç. Шкулченхи вĕренĕве йĕркелессинче çаврăнăçуллă, çĕнĕ пултарулăх мелĕсем кирлĕ. Ку сферăри ĕç вырăнти хăй тытăмлăх влаçĕн чи пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕсенчен пĕри.

Ут-пӳ тата ăс-тăн тĕлĕшĕнчен сывă ачасене сехетсерен тата кунсерен воспитани парас пулать. Авиценна каланă: кашни шухăшах пирĕн организма мĕнле-тĕр ĕç тума хистет. Çын мĕне те пулсан аркатма шутларĕ пулсан – каналсенчи вăй шалти органсен клеткисене аркатма тытăнать. Пирĕн ачасем мĕнлерех фильмсем пăхни ашшĕ-амăшне шухăшлаттарать-ши? Боевиксем, «хăратаканнисем»! Апла пулсан ачасенчен мĕн кĕтетпĕр? Лайăх сывлăх вăл – лайăх, ырă шухăш-туйăмсем вĕт. Лайăх сывлăх вăл - лайăх пуплев, усал сăмахсемпе вăрçни вара сывлăха хавшатать. Çавăнпа та çак киревсĕр йăлана хирĕç урамра та, общество транспортĕнче те, пур çĕрте те, чăн çапăçу пуçлама вăхăт - обществăна пĕтĕмĕшле воспитани парса кăна мар, саккунсене хаярлатса та, унта палăртнă йĕркесемпе милиципе суд ĕçченĕсем практикăра усă курассине йăлана кĕртсе те.

Ас-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕнче Пĕтĕм Раççейри ача-пăча кĕнекин фестивалĕ Чăваш Ене чи паллă та чи юратса вулакан авторсене пуçтарчĕ. Ку питĕ тĕрĕс те кирлĕ мероприяти пулчĕ, вăл республикăра нихăçан та вĕçленмелле мар! Çакăн пек даннăйсем пур: XX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсемччен ашшĕ-амăшĕсен 50 проценчĕ ачисене кĕнеке вуласа хавхалантарнă пулсан, хальхи вăхăтра çакна вĕсен 7 проценчĕ кăна тăвать. Пирĕн вĕт питĕ лайăх ача-пăча библиотекисем пур, вĕсенче ашшĕ-амăшĕсемпе ачасем валли ятарлă занятисем ирттерекен энтузиастсемпе волонтерсем ĕçлеççĕ. Сывă та ырă ача пăхса çитĕнтерес тесен ăна уй-хире, вăрмана илсе тухса çӳрĕр, сенкер тӳпене, çемçе курăка, ĕлккен чечеке пăхса савăнма вĕрентĕр. Сывлăх вăл – йĕркеллĕ кăмăл-туйăм, нумай хускални, савăнăçăн кулă. Пирĕн ачана çывăх çыннисемшĕн, планетăшăн, хамăр йĕри-таврари пур япалашăн та тăрăшма хăнăхтармалла. Ана тата юратма, чăтăмлă пулма, тĕрĕслĕхе вĕрентмелле. Амсануран, йĕксĕклĕхрен, сĕмсĕрлĕхрен айккинче тăма пулăшмалла. Хăйĕн пурнăçне тĕрĕс йĕркелесе пыма вĕрентмелле. Çак çул чăннипех те сывлăхпа вăрăм ĕмĕр патне илсе пырать.

Хисеплĕ депутатсем!

Паян эпĕ юриех ачасемпе ĕçлесе тунă çитĕнӳсем çинче чарăнса тăмарăм, ятарласах пикенсе ĕçлемелли киревсĕр самантсене палăртса хăварас терĕм. Пирĕн обществăн, хăйĕн нушисемшĕн хăйне мар, кама-тăр урăххине е «партипе правительствăна» айăплама хăнăхнăскерĕн, куç кĕски çине час-час пăхма кирлĕ тесе шутлатăп. Паян эпир унта йышпа пĕрле пăхса илтĕмĕр тесе шутлăпăр. Ачалăхпа çемье ыйтăвĕсене пĕтĕм йышпа кашни кунах вăй хурса татса пама тытăнатпăр тăк – мĕн те пулин пулатех. Эпир пултратпăр! Ахальтен мар ваттисем: «Ĕçрен хăраман ăста пулнă», - тесе калана. Хамран çапла хушнă пулăттăм: ку ĕçе эпир ачасене, пĕтĕм тĕнчене, хамăра та пысăк, чăн юратупа юратса тума тивĕç.

История кĕрсе юлакан 2006 çул Ас-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ пулчĕ. Маншăн, унăн пĕтĕмлетĕвĕсене хаклаканшăн, ыйту миçе программăллă мероприяти ирттернинче, культура отраслĕне мĕн чухлĕ укçатенкĕ хывнинче, çакă пĕлтерĕшлĕ пулсан та, çивĕч мар. Эсир пĕлетĕр, эпир ку тĕлĕшпе тахçанах, нумай çул тата тытăмлăн ĕçлетпĕр. Культурăна хывнă инвестицисем юлашки вунă çулта 8 хут ӳснĕ. 2005 тата 2006 çулсенче эпир культура ĕçченĕсен – çав калама çук черченкĕ те çӳхе, анчах обществăшăн питĕ кирлĕ сферăра, вăл хальхи пурлăх ыйтăвĕсен туртăмĕсен витĕмĕпе хăйĕн аталанăвĕнче чарăнса ан лартăр тесе тăрăшакансен - ĕç укçине ӳстерес енĕпе ĕçлерĕмĕр.

Маншăн урăххи пĕлтерĕшлĕрех. Ас-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ ентешсен ăс-тăнĕнче ним йĕрсĕр иртменнине, çав тапхăрта Чăваш Енри кашни çынах мар пулсан та, вĕсенчен ытларахăшĕ мĕн çиесси пирки кăна мар, хăйĕн пурнăçĕнчи пĕлтерĕшли çинчен, чун пирки, ăна аталантарасси пирки, çавăн пекех ырă кăмăл, хамăр йĕри-таврари тата шалти илемлĕх, хамăр юратакан çынсене кашни кунах савăнăç кӳресси, палламан çынсене те ырă сунмалли пирки шухăша кайнине шанас килет. Ас-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ историе ячĕпе çеç кĕрсе юлĕ, ĕçсемпе вара вăл малла тăсăлĕ. Кун пирки шантарсах калатăп. Пĕрре Атăлçи тĕп хули статусне çĕнсе илнĕ Шупашкар ку миссие яланах çӳлте тытса пырасса, вăл çав вырăна тивĕслине хăйĕн обществăпа этика тата социаллă статусĕпе тăтăшах çирĕплетсе пырасса та шанас килет.

Паян, Татьянăсен кунĕнче, çакна палăртмасăр иртейместĕп, шăпах Ас-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕнче Чăваш Енре паллă пулăм пулса иртрĕ: Шупашкарта Асап тӳснĕ Çеттуй Татиана чиркĕвĕнче – çамрăксемпе студентсен хутне кĕрекенĕн ячĕпе хисепленекен храмра - служба иртме пуçларĕ. Унăн никĕсне Мускав тата Пĕтĕм Руç Патриархĕ хутшăннипе пилĕк çул каярах хывса хăварнă. Çав чирку, строительство вăхăтĕнче Пукрав чиркĕвне çавăрăнса, тата та хитреленсе чаплăланчĕ. Çавна май пурне те Павăл апостол «вăхăта хаклăр, мĕншĕн тесен кунсем чее» тесе каласа асăрхаттарнине аса илтерес тетĕп. «Чее» тенине кунта вăхăт «ултавлă» тенĕ пек ăнланмалла. Пире яланах вăхăт чикĕсĕр нумай пек туйăнать. Чăннипе вара ку апла мар. Çавăнпа та обществăна тата çывăх çынсене пулăшассине, усă кӳрессине пĕр çеккунтлăха та кая хăвармасăр ырă тума васкас пулать.

Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!

Ача çулталăкне кĕнĕ май, манăн паян Чăваш Ен пуласлăхĕшĕн – пирĕн ачасемшĕн - вăхăта, чун-чĕре вăй-халне шеллемесĕр нумай çул тăрăшакансене тав тăвас килет. Уйрăмах - йывăр шăпаллă çамрăксемпе, чирлĕ тата сусăр, социаллă пурнăç енчен йывăрлăх тӳсекен ачасемпе ĕçлекенсене. Чăн малтанах, шăпах çав ентешсем пирĕн Аслă çутта кăлараканăмăрăн, хăйĕн «Чăваш халăхне панă халалĕнче» пуласлăха витĕр курса пĕр ĕмĕр валли çеç мар гражданлăхăн, моральпе кăмăлсипетĕн канонĕсене палăртса хăварнă, гуманлă тата цивилизациллĕ тĕнче тытăмĕн никĕсне - халăхсен хушшинчи Туслăха, Çут ĕçне, Çемьене тата Турра ĕненнине тĕпе хурса йĕркеленĕ Иван Яковлевич Яковлевăн идейисене чун-чĕрипе парăнса ăшĕсене хывнă тесе шутлатăп. Ача çулталăкĕнче çав пархатарлă идейăсене республикăра пурăнакан кашни çынах тарăн ăнланса илсе ăша хывасса питĕ шанас килет, çавăнпа шанатăп та.

Итленĕшĕн тавтапуç!